**Юрату**

Ешӗл харсăр чӗре юратма чарăнсан
Пурăнма кирлӗ мар, ан ăмсан.

Пулмасан юрату
Савăк мар çутă кун:
Пултăр санăн яту,
Илӗртместчапӗ ун.
Пулмасан юрату,
Çук вăл урăх телей:
Сан пулмасть хăвату
Çитме пулнă тӗле.
Пулмасан юрату,
Ӗмӗт çук тӗнчере;
Камăн пур юрату,
Вăл ӗçлет, çӗнтерет.

Юрату - вут çунни, юрату - вут тивни,
Юрату - вăл телей, - тетӗп эпӗ, Ивник.

1938

*Ивник, И. Юрату / И. Ивник // Чăваш сăмахлăхӗ : 10-мӗш класăн вӗренӳпе вулав кӗнеки / Н.Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатӗрленӗ. – Шупашкар, 1996. – II пай. - С. 209.*